Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1943
ФЕВРАЛЬ
16
ЫТЛАРИКУН
37(6274) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

I.

КӐНТӐР ФРОНТӖНЧИ ВОЙСКӐСЕМ ДОН ҪИНЧИ РОСТОВА ЙЫШӐНСА ИЛНӖ

Генерал-полковник **Р. Я. МАЛИНОВСКИЙ** юлташ ертсе пынипе Кӑнтӑр фронтӗнчи войскӑсем **ДОН ҪИНЧИ РОСТОВ** хулишӗн темиҫе кун хушши хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Паян, февралӗн 14-мӗшӗнче, противник вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, пирӗн войскӑсем **ДОН ҪИНЧИ РОСТОВ** хулине тытса илнӗ.

РОСТОВ хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче генерал-лейтенант **В. Ф. ГЕРАСИМЕНКО** войскисем уйрӑмах палӑрнӑ. Хулана чи малтан подполковник **КОВАЛЕВ** юлташӑн, подполковник **СИВАНКОВ** юлташӑн, подполковник **ДРЯХЛОВ** юлташӑн, майор **ДУБРОВИН** юлташӑн чаҫӗсем вӑркӑнса кӗнӗ. Хӗвеланӑҫӗнчен ҫавӑрса илсе, хулана илме полковник **ШАПКИН** юлташӑн тата майор **ХОДОС** юлташӑн чаҫӗсем пулӑшнӑ.

II.

КӐНТӐР-ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНТӖНЧИ ВОЙСКӐСЕМ ВОРОШИЛОВГРАД ТАТА КРАСНЫЙ СУЛИН ХУЛИСЕНЕ ЙЫШӐНСА ИЛНӖ

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи арми генералӗ **М. Ф. ВАТУТИН** юлташ ертсе пыракан войскӑсем хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн Украинӑра **ВОРОШИЛОВГРАД** хулине, Ростов облаҫӗнче **КРАСНЫЙ СУЛИН** хулине тытса илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Хӗрлӗ Ҫар ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынипе хавхаланса, Чӑваш АССР-ӗнчи Тӑвай районӗнчи „Красная Чувашия" колхозӑн колхозникӗсем боевой самолетсем тума 300.000 тенкӗ укҫа пачӗҫ тата Хӗрлӗ Ҫар фондне 500 пӑт тырӑ хыврӗҫ. Пирӗн укҫапа тунӑ самолетсене „Красная Чувашия" колхоз" ят пама ыйтатпӑр.

Тӑвай МТС-ӗн политотдел начальникӗ. Чернов.

„Красная Чувашия" колхозӑн председателӗ Иванов.

Чӑваш АССР-ӗнчи Тӑвай районӗнчи „Красная Чувашия" колхоз

Тӑвай МТС-ӗн политотдел начальникне ЧЕРНОВ юлташа
Колхоз председательне ИВАНОВА

„Красная Чувашия" колхозри колхозниксемпе колхозницӑсене, боевой самолетсем тума 300.000 тенкӗ пухнӑскерсене тата Хӗрлӗ Ҫар фондне 500 пӑт тырӑ хывнӑскерсене, манран тӑванла салам калӑр тата Хӗрлӗ Ҫар ячӗпе тав тӑвӑр.

И. СТАЛИН.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Вырӑнти промышленность предприятийӗсемпе промысла артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсем

Чӑваш АССР Совнаркомӗ вырӑнти промышленность предприятийӗсен тата Чӑваш республикинчи промысла артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 ҫулти январь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса ҫапла йышӑннӑ:

Вырӑнти промышленность енӗпе

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Альгешеврӑри ҫатан тӗртекен «Басон» фабрикӑран илсе, Сӗнтӗрвӑрринчи райпромкомбината (управляющийӗ Сигаев, парторг Тимофеев, завком председателӗ Копылов) парас тата ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме райпромкомбината 15.000 тенкӗ преми парас;

Вӑрнар райпромкомбинатне (управляющийӗ Кузнецов, райисполком председателӗн вырӑнти промышленность енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Скворцов) ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме 10.000 тенкӗ преми парас;

Шӑмӑршӑ райпромкомбинатне (управляющийӗ Карпов, райисполком председателӗн заместителӗ Григорьев) ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме 6.000 тенкӗ преми парас;

Январь уйӑхӗнче Ишлей, Элӗк, Калинино, Хӗрлӗ Чутай, Шӑхасан райпромкомбиначӗсем тата Канаш хулинчи промкомбинат лайӑх ӗҫленине палӑртас.

Промысла кооперацийӗ енӗпе

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Карачъялӗнчи «Труд» артельрен илсе Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Астакассинчи артеле (правлени председателӗ Корнилов) парас тата ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме 15.000 тенкӗ преми парас;

Октябрьски районри Карачъялӗнчи «Труд» артеле (правлени председателӗ Мокеев) ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме 10.000 тенкӗ преми парас;

Канашри «Авангард» артеле (правлени председателӗ Васильев) ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме 5.000 тенкӗ преми парас;

Красноармейски районри Енӗшкассинчи артеле (правлени председателӗ Лукин) ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме 5.000 тенкӗ преми парас;

Январь уйӑхӗнче ҫак артельсем лайӑх ӗҫленине палӑртас: Древпромсоюз енӗпе — Ленин ячӗпе тӑракан артель, Первомайски районри Кив Айпеҫри артель, Сӗнтӗр районӗнчи Янӑмри «Дружба» артель; Швейпромсоюз енӗпе — Ҫӗрпӳри профтехшкул, Шӑмӑршӑ районӗнчи «Искра» артель, Улатӑрти «Красная швея» артель, Сӗнтӗр районӗнчи Кӗҫӗн Карачкинӑри «Тӗрлекен» артель; Промсоюз енӗпе—Сӗнтӗр районӗнчи Ильинкӑри «Волга» артель тата Улатӑрти «Красная звезда» артель.

Ҫакӑнпа пӗрлех Совнарком январь уйӑхӗнче ҫак артельсем пачах ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртнӑ: Тарпромсоюз енӗпе — Ишлей районӗнчи Чурачӑк тата Шуркасси артелӗсем, Ҫӗрпӳ районӗнчи Туҫи артелӗ, Сӗнтӗр районӗнчи Шатракасси артелӗ, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Анаткас артелӗ; Швейпромсоюз енӗпе — Шупашкар районӗнчи Альгешеврӑри «Паха тӗрӗ» артель, Ҫӗмӗрле районӗнчи Ширшов ячӗпе тӑракан артель; Древпромсоюз енӗпе—Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Новински артелӗ.

Совнарком ҫакна палӑртнӑ: республикӑри промкоопераци ӗҫӗ 1943 ҫулхи январӗнче кӑштах лайӑхланнӑ пулин те, артельсен социализмлӑ ӑмӑртӑвне ертсе пырасси халӗ те пачах ҫителӗксӗр-ха. РСФСР Совнаркомӗ ҫуменчи промкоопераци управленийӗн Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйне Степанов юлташа, Промсоюз президиумӗн председательне Воротилов юлташа, Швейпромсоюз президиумӗн председательне Писарева юлташа, Древпромсоюз президиумӗн председательне Андреев юлташа тата Тарпромсоюз президиумӗн председательне Гордеев юлташа, ҫавӑн пекех тата райсоветсемпе хула совечӗсен исполком председателӗсене Совнарком ӑмӑрту ӗҫне конкретно ертсе пыма тата февральте плана пур артельсем те тултармалла тума хушнӑ.

Чӑваш республикинчи колхозниксене, колхозницӑсене, МТС-семпе совхозсен работникӗсене тата ялхуҫалӑх специалисчӗсене пурне те

Хаклӑ юлташсем!

Гитлерӑн юнлӑ бандисем пирӗн Тӑван ҫӗршыв ҫине тапӑннӑранпа ҫулталӑк та саккӑр уйӑх иртрӗ ӗнтӗ. Украина, Белоруссия, Крым, Донбасс юнпа витӗнчӗҫ. Аннесемпе арӑмсен тата ачасен чыслӑхӗ мӑшкӑлланчӗ. Ҫурт-йӗрсене аркатса пӗтерчӗ. Халӑхӑн пуянлӑхне ҫаратса пӗтерчӗ, авалхи культурӑн памятникӗсене мӑшкӑлланӑ.

Пирӗн Совет ҫӗршывӗ аслӑ тӗрӗслӳ витӗр тухать. Ҫапӑҫу хирӗсенче пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн тата кашни ҫыннӑн кун-ҫулӗ пирки ыйту татӑлать. Ҫак вӑрҫӑра ӗнтӗ Совет государстви пуласси-пуласси марри ҫинчен, Совет Союзӗн халӑхӗсем ирӗклӗ пуласси е вӗсем пусмӑрлӑха кӗрсе ӳксе чура пулса тӑрасси пирки ыйту татӑлать. Ҫак вӑрҫӑ мӗнле вӗҫленнинчен пирӗн тӑван ҫӗршывӑн тата пӗтӗм этемлӗхӗн пуласлӑхӗ килет.

Ака мӗншӗн ӗнтӗ нумай миллионлӑ совет халӑхӗ отечественнӑй аслӑ вӑрҫа пӗр ҫын пек ҫӗкленсе, хӑйӗн юратнӑ Тӑван ҫӗршывне кӑкӑрпа сыхлама тытӑнчӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсем, аслӑ полководец Сталин юлташ ертсе пынипе кӗрешсе, захватчиксен вӑрӑ-хурахла бандине ҫӗмӗрсе тата пӗтерсе пыраҫҫӗ.

Нимӗҫ войскисене тата гитлерла вассалсен ҫарӗсене Сталинград патӗнче, Дон шывӗн вӑтаҫӗрӗнчи районра, Ҫурҫӗр Кавказра, Воронежран кӑнтӑртарахра тата хӗвеланӑҫнерехре ҫӗмӗрсе тӑкни, нимӗҫ войскисем Великие Луки районӗнче поражени тӳсни, Ленинград блокадине татса тухни, халӑх пурӑнакан нумай ҫӗршер пунктсене тӑшманран ирӗке кӑларни совет ҫыннисен чӗрисене калама ҫук савӑнтарать, пирӗн аслӑ Тӑван ҫӗршыв хӑйӗн мухтавлӑ воинӗсемпе савӑнать. Совет воинӗсем нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене ҫинеҫинех пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫар хӑйӗн ялавӗсене ӗмӗр-ӗмӗр манми мухтавпа витет.

Хӑйсен чаплӑ воинӗсемпе танлашас тесе, рабочисемпе колхозниксем, пӗтӗм совет халӑхӗ, нимӗҫ оккупанчӗсене хӑвӑртрах ҫӗмӗрсе тӑкма мӗн кирлине мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара пурне те парса тӑрас тесе, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ, тылра нихӑҫан пулман паттӑрлӑх кӑтартаҫҫӗ.

Сталин юлташ ҫӗршывпа фронт валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай тата промышленность валли чӗртавар пама чӗнсе каланисене пурнӑҫа кӗртсе пырса, колхозлӑ хресченсем хӑйсен вӑйне шеллемесӗр ӗҫлерӗҫ, иртнӗ ялхуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ.

Октябрьти Социализмлӑ аслӑ революци 25 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ хӑйӗн историллӗ докладӗнче Сталин юлташ колхозсен ӗҫне тивӗҫлипе хакларӗ, вӑл: „Пирӗн колхозсемпе совхозсем, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи мӗнпур йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр, ним иккеленмелли те ҫук, ҫителӗклӗ ӗҫлеҫҫӗ". „Пирӗн колхозсемпе совхозсем те тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе халӑхпа Хӗрлӗ Ҫар валли продовольстви, промышленность валли чӗртавар ҫителӗклӗ парса тӑраҫҫӗ," терӗ.

Колхоз стройӗ вӑрҫӑ испытанийӗсене чыслӑн тӳссе ирттерчӗ. Колхозсемпе совхозсем пулман пулсан, пирӗн ҫӗршыв ялхуҫалӑх умне вӑрҫӑ тапхӑрӗ кӑларса тӑратнӑ йывӑрлӑхсене ҫӗнтерейӗмен пулӗччӗ, ҫакна халӗ кашниех курса тӑрать.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн фрончӗсенче пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар ӑнӑҫлӑ наступлени туни колхозла ялта производствӑллӑ тата политикӑллӑ активлӑхӑн ҫӗнӗ хумне ҫӗклерӗ. Тамбов тата Саратов облаҫӗсенчи колхозниксемпе колхозницӑсем пуҫарнипе, харпӑрхӑй перекетлесе хӑварнӑ укҫа-тенке танксен колоннисемпе самолетсен эскадрильисене тума парас тӗлӗшпе пӗтӗм ҫӗршывра патриотизмлӑ юхӑм сарӑлса кайрӗ.

Юратнӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫапӑҫури хӑватне ӳстерессишӗн пыракан пӗтӗм халӑх движенине орденлӑ Чӑваш республикинчи колхозниксем те хӑвӑрт йышӑнса илчӗҫ. Пирӗн республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем кӗске вӑхӑт хушшинчех хӑйсен перекетленӗ укҫисене хаяр танксемпе боевой самолетсем тума 62 миллион тенкӗ ытла хывреҫ, Хӗрлӗ Ҫар фондне планран иртгерсе 120 пин пӑт ытла тырӑ, нумай аш-какай тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем хывреҫ. Ҫапла вара Сталин юлташран икӗ хут салам илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Саратов облаҫӗнчи колхозникӑн Ферапонт Головатыйӑн патриотла пуҫарӑвне йышӑнса илсе, пирӗн республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем хӑйсен перекетленӗ мӗнпур укҫине Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑйхӑватне ӳстерме, нимӗҫ оккупанчӗсене ҫӗмӗрсе тӑкассине хӑвӑртлатма параҫҫӗ. Республикӑри ӗҫҫыннисем Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председательне Антонин Дмитриевич Васянин юлташа, Пӑрачкав районӗнчи „Красный пахарь" колхоз председательне Михаил Владимирович Дубровин юлташа, Улатӑр районӗнчи „Красный луч" колхоз колхозникне Андрей Михайлович Сарсков юлташа, Чкаловски районри „Маяк" колхоз председательне Зямалетдин Хусеинович Минаев юлташа, Хӗрлӗ Чутай районӗнчи ВКП(б) ячӗпе тӑракан колхоз председательне Федот Иванович Гурьянов юлташа, Хӗрлӗ Ҫара хӗҫпӑшаллантарма хӑйсем перекетленӗ укҫаран 100-шер пин тенкӗ хывнӑскерсене, Хӗрлӗ Чутай районӗнчи „Мотор" колхозри ферма заведующине тата парторганизаци секретарьне Александр Кириллович Тверсков юлташа, 75 пин тенкӗ хывнӑскере, Пӑрачкав районӗнчи Молотов ячӗпе тӑракан колхоз колхозникне Андрей Федорович Пугачев юлташа, танк тума 110 пин тенкӗ панӑскере, Пӑрачкав районӗнчи Максим Горький ячӗпе тӑракан колхоз колхозницине Мария Филипповна Ширманова юлташа, 50 пин тенкӗ хывнӑскерне, тата республикӑри малта пыракан ытти нумай юлташсене лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ.

Иртнӗ ҫулта пирӗн республикӑри колхозсем, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, тырпул тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫне ӳстерес ӗҫре чылай пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Республика ялхуҫалӑх ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗ, государствӑна тырӑ памалли плана тултарчӗ. Кашни гектартан вӑтам шута 13,5 центнер тырпул туса илнӗ. Ҫурхи тырӑсем акӑнакан ҫӗр лаптӑкне ҫулталӑк хушшинче 16 пин гектар чухлӗ, кӗрхи тырӑсем акӑнакан ҫӗр лаптӑкне 31 пин гектар чухлӗ ӳстернӗ. Нумай колхозсем иртнӗ ҫулта кашни гектартан ҫӗршер пӑт тырӑ туса илчӗҫ.

Ҫапла, сӑмахран, Вӑрнар районӗнчи Ленин орденлӗ, Сталин ячӗпе тӑракан колхоз вӑтам шутпа кашни гектартан 116 пӑт тырӑ илнӗ, Шупашкар районӗнчи „Осоавиахим" колхоз—111-шер пӑт, Елчӗк районӗнчи „Марс" колхоз—100-шер пӑт, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Наркомюст ячӗпе тӑракан колхоз кашни гектартанах 183 пӑт пӑрҫа, Ҫӗрпӳ районӗнчи „Ӗмӗт" колхоз—110-шер пӑт пӑрҫа тата 1.037-шер пӑт ҫӗрулми туса илнӗ. Улатӑр районӗнчи „Путь Ильича" колхоз кашни гектартан 165 пӑт махорка туса илнӗ. Улатӑр районӗнчи „Путь Ильича" колхозри Мария Яковлевна Додонова юлташӑн звени гектартан 423 пӑт махорка туса илнӗ, Кувакино районӗнчи „Ударник" колхозри Анна Карповна Тюрина юлташӑн звени гектартан 518 пӑт махорка туса илнӗ. Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозӑн звеньевойӗ Елизавета Ерошина юлташ гектартан 55-шер пӑт кок-сагыз тымарӗ пуҫтарса илнӗ.

Колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетекенсем те фронтри пек ӗҫлерӗҫ. Республикӑри колхозсенче мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен хисепӗ ҫулталӑк хушшинче 44,9 процент чухлӗ, сыснасен хисепӗ—35,5 процент чухлӗ, сурӑхсемпе качакасен хисепӗ 78 процент чухлӗ ӳсрӗ. Выльӑх-чӗрлӗхӗн продуктивноҫӗ хӑпарчӗ. Ҫӗрпӳ районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри доярка Таисия Драгункина юлташ 1942 ҫулта кашни ӗне пуҫне 3.090-шар литр сӗт суса илнӗ. Сӗнтӗр районӗнчи „Ҫӗнӗ Юнга" колхозри свинарка Фекла Михайловна Вазикова юлташ кашни сысна аминчен 20,3 ҫӑвӑр илнӗ. Комсомольски районри Шмидт ячӗпе тӑракан колхоз телятници Лидия Николаевна Бабаева юлташ хӑйне ҫирӗплетсе панӑ пӑрусене пурне те сыхласа хӑварнӑ, вӑл пӑрусем талӑкра вӑтам шутпа 750 грамм чухлӗ хутшӑнса пынӑ.

Республикӑра чаплӑ ҫынсем ӳссе пӑларчӗҫ. Ҫӗмӗрле МТС-ӗнчи комбайнер Иван Михайлов юлташ „Коммунар" комбайнпа 510 гектар вырса пуҫтарнӑ, Елчӗк МТС-чи трактористка Анна Гордеева юлташ плана 251 процент тултарнӑ тата 654 килограмм горючи перекетленӗ. Канаш МТС-ӗнчи Никита Павлович Павлов юлташ ертсе пыракан тракторсен бригади плана 163 процент тултарса, 1.700 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Пирӗн республикӑна МТС-сен ӗҫӗн результачӗсем тӑрӑх тата колхозсенче обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме кандидата тӑратнӑ.

Анчах та эпир тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивноҫне хӑпартас тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсем пире лӑпланса ларма сӑлтав памаҫҫӗ, эпир ҫакна лайӑх пӗлетпӗр. Фронт пирӗнтен ытларах ялхуҫалӑх продукчӗсем, промышленность—чӗртавар ыйтаҫҫӗ. Фронта пулӑшассине пирӗн кашни кунах вӑйлатса пырас пулать. Пирӗн тимлӗн ӗҫлесе, хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн паттӑр воинӗсемпе танлашма тӑрӑшас пулать, ӗҫре пысӑк организованность кӑтартмалла, кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулӗнче мӗнпур йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пӗтӗм вӑя хумалла.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи иккӗмӗш ҫураки ҫывхарса килет. Ҫакӑ вӑл—ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи чи ответлӑ вӑхӑт пулса тӑрать. Ҫураки кӑҫал пӗлтӗрхинчен чылай йывӑртарах условисенче пулса иртет. Ҫавӑнпа та кашни колхозникпе колхозницӑн, кашни трактористпа комбайнерӑн, ҫӗрӗҫӗнчи кашни работникӑн ҫакна ӑнланса илес пулать тата харпӑрхӑйӗн пӗтӗм вӑйне ҫураки ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн хатӗрленсе ирттерес ӗҫе хурас пулать. Эпир колхозсенче ӑнӑҫлӑн ӗҫленинчен ҫӗршывпа Хӗрлӗ Ҫар валли тырпул, аш-какай, пахча-ҫимӗҫ тата промышленность валли чӗртавар ҫителӗклӗ парса тӑрасси килнине асра тытас пулать.

1943 ҫулта вӑрҫӑ ыйтнӑ пек пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн колхозсен, МТС-сен, совхозсен тата районсен социализмлӑ ӑмӑртӑвне организацилесси ҫинчен Горький облаҫӗнчи ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансем пани сӗнӗве ырласа, эпир мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсене, МТС-семпе совхозсен работникӗсене тата ялхуҫалӑх специалисчӗсене ҫак ӑмӑртӑва анлӑн хутшӑнма тата ҫуракине хатӗрленес ӗҫе вӑйлӑн сарса яма, ҫапла майпа Хӗрлӗ Ҫар 25 тултарнӑ тӗле ҫак ӗҫре татӑклӑ ҫитӗнӳсем тума тата ҫуракине пӗтӗмпех хатӗрленсе ҫитнипе тухма чӗнетпӗр.

Пӗр кун та вӑраха ямасӑр, вӑрлӑхсене акма хатӗрлес пулать, вӑрлӑх хывас, тасатас тата унӑн шӑтас пахалӑхне тӗрӗслес ӗҫе мартӑн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр вӗҫлемелле. Тракторсене, пӗтӗм ялхуҫалӑх машинисене тата ӗҫ инвентарьне апрелӗн 10-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех юсаса, хатӗрлесе ҫитерес пулать. Хирти ака ӗҫӗнче ӗҫлеме сухаҫсене, акакансене, яровизаторсене тата колхозри ытти кадрсене хатӗрлемелле. Лашасене ҫураки валли лайӑх хатӗрлесе ҫитермелле, ҫавӑнпа та вӑйсӑр лашасене пурне те халех вӑйлӑ апат ҫине тӑратмалла, лашасене пӑхас ӗҫри обезличкӑна пӗтермелле. Хӑмӑт-пӑявсемпе транспорт инвентарӗсене малтанах юсаса хумалла. Пур колхозсенче те ӗнесемпе вӑкӑрсене ялхуҫалӑх ӗҫӗнче ӗҫлеме вӗрентмелле, ҫапла майпа лашасене хуҫалӑх ӗҫӗнчи тата транспорт ӗҫӗсенчен хӑтарса, вӗсемпе пуринпе те сухапа ака ӗҫӗнче усӑ курмалла.

Вӑрнар районӗнчи колхозсем хӑйсен хирӗсене 120.800 лав тислӗк кӑларнӑ тата хӗллехи вӑхӑтра тислӗк кӑлармалли плана тултарнӑ. Вӗсен примерне йышӑнса илсе, колхозсенче тислӗкпе тата ытти вырӑнти удобренисемпе, минераллӑ удобренисемпе пӗтӗмӗшпех усӑ курмалла тӑвас пулать. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тырпулшӑн кӗрешсе, пур колхозсенче те малта пыракан стахановла агротехникӑна анлӑн ӗҫе кӗртмелле, ака ӗҫӗсене пурне те пысӑк пахалӑхпа туса ирттермелле, ҫавӑнпа та колхозниксем хушшинче халех агротехникӑллӑ вӗренӗве сарса ямалла тата колхозниксене ҫулте асӑннӑ мероприятисен пахалӑхӗ ҫинчен кулленех ӑнлантарса памалла.

Эпир, партипе совет тата колхоз активӗн республикӑри канашлӑвӗн участникӗсем, 1943 ялхуҫалӑх ҫулӗнче пирӗн колхозсем умӗнче тӑракан задачӑсене сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн, хамӑр ҫине ҫакӑн пек обязательствӑсем илетпӗр тата колхозниксене, колхозницӑсене, МТС-семпе совхозсен работникӗсене тата ялхуҫалӑх специалисчӗсене пурне те ҫав обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртессишӗн большевикла кӗрешме чӗнетпӗр:

Ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне 1943 ҫулта 10 процент чухлӗ хӑпартмалла.

Мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен хисепне 25 процент, сыснасен хисепне 22 процент, сурӑхсемпе качакасен хисепне 21 процент чухлӗ ӳстермелле.

Тӑрантаракан кашни ӗнерен 1.200 литртан кая мар сӗт суса илмелле.

Кашни сурӑхран вӑтамран 2,5 килограмм ҫӑм касса илмелле.

100 сурӑхран сахалтан та 115 путек илмелле.

Пӗр сыснаран 12 ҫӑвӑртан кая мар илмелле.

Ӗҫлеме пултаракан кашни колхозник ҫулталӑкра 250 ӗҫкунӗнчен кая мар тумалла.

Хаклӑ юлташсем—колхозниксем, колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсен работникӗсем, ялхуҫалӑх специалисчӗсем! Хамӑр ҫине илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртес тата кӑҫал нихӑҫанхи пек мар пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илес, выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне малалла ӳстерсе пырас тата машинӑсемпе тракторсен паркӗпе лайӑх усӑ курас тесе, хамӑрӑн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешер!

Пирӗн ҫулпуҫ тата учитель Сталин юлташ пире фронта пулӑшассине пур майсемпе те вӑйлатма, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеме, фронтпа ҫӗршыв валли ытларах та ытларах ялхуҫалӑх продукчӗсем пама чӗнет. Пирӗн чыслӑ ӗҫ—юратнӑ ҫулпуҫӑн наказне пурнӑҫа кӗртесси.

Кӑҫалхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене лайӑх туса ирттерессишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнӑр, ӑмӑртура мала тухассишӗн кӗрешӗр.

Икӗ ҫыншӑн, виҫӗ ҫыншӑн ӗҫлер, нихӑҫанхи пек мар пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илер, пирӗн выльӑх-чӗрлӗхсен тупӑшне ӳстерер! Ҫапла тунипе эпир фронта калама ҫук пысӑк пулӑшу парӑпӑр тата нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫе хӑвӑртлатӑпӑр.

Сывӑ пултӑр пирӗн юратнӑ Тӑван ҫӗршыв, унӑн ирӗклӗхӗ, унӑн никама пӑхӑнманлӑхӗ!

Сывӑ пултӑр халӑхсен ҫулпуҫӗ, аслӑ полководец Сталин юлташ!

Партипе совет тата колхоз активӗн республикӑри канашлӑвӗ

Январӗн 13—14-мӗшӗсенче Шупашкарта партипе совет тата колхоз активӗн республикӑри канашлӑвӗ пулса иртрӗ.

Канашлӑвӑн кун йӗркинчи пӗрремӗш ыйту тӑрӑх тунӑ докладра ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ республикӑри колхозсем 1942 ҫулта тырпул тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗхӗн йышӗпе тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунине палӑртрӗ. Аслӑ Сталин юлташӑн чӗнӗвӗ ҫине колхозниксем, колхозницӑсем, трактористсемпе комбайнерсем ҫӗршывпа фронта пулӑшу парассишӗн вӑя шеллемесӗр ӗҫленипе ответлерӗҫ. Чӑваш республики иртнӗ ҫулта ялхуҫалӑхӗнчи пур ӗҫсене те ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗ. Государствӑна тырӑ тата аш-какай памалли обязательствӑсене пурнӑҫларӗ.

Чарыков юлташ ялхуҫалӑхӗнче ырми-канми ӗҫленӗ, хӑйсен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек пысӑк пултарулӑхпа туса пынӑ стахановецсем ҫинчен каларӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех Чарыков юлташ хӑшпӗр районсен, колхозсен тата МТС-сен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене те пӑллӑ турӗ. Чарыков юлташ республикӑн ялхуҫалӑхне малалла вӑйлӑн аталантарса пырас тата ҫывхарса килекен ҫуракине вӑхӑтра хатӗрленес

(Юлашки 2-мӗш страницӑра).

Партипе совет тата колхоз активӗн республикӑри канашлӑвӗ

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш страницӑра).

тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене кӑтартса пачӗ.

Чарыков юлташӑн доклачӗ тӑрӑх пынӑ пренире пурӗ 26 ҫын тухса каларӗҫ. Социализмлӑ ӑмӑртура республикӑра мала тухнӑ Шупашкар районӗнчи колхозсем 1942 ялхуҫалӑх ҫулӗнче мӗнле ӗҫлени ҫинчен ВКП(б) Шупашкар райкомӗн секретарӗ Караушев юлташ каласа пачӗ.

— Пирӗн районри колхозсем 1942 ҫулта вӑтам шутпа кашни гектартан 15,3 центнер тырӑ туса илчӗҫ. Анчах ҫак ҫитӗнӳпе эпир лӑпланса лармастпӑр. Шупашкар районӗнчи колхозсем 1943-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗнче тата пысӑкрах тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн пур майсемпе те кӗрешеҫҫӗ, — тет Караушев юлташ.

Январӗн 13-мӗшӗнчи каҫхи ларура Чарыков юлташ доклачӗ тӑрӑх пренире Ҫӗрпӳ районӗнчи «Молодая сила» колхоз председателӗ Музалов, ВКП(б) Вӑрнар райкомӗн секретарӗ Коротков, Советски районри «Сеятель» колхоз председателӗ Андреев юлташсем тухса каларӗҫ.

— Иртнӗ ялхуҫалӑх ҫулӗнче Вӑрнар районӗнчи колхозниксем тухӑҫлӑ тырпулшӑн хӗрӳллӗн кӗрешрӗҫ. Кӗрешӳ результачӗ начар мар: район вӑтам шутпа гектартан 15,8 центнер тӗштырӑ туса илнӗ. Вӑрнар районӗнчи колхозсен тырпула тата нумайрах туса илме пур майсем те пур. Ҫакӑншӑн ырми-канми ӗҫлеме шутлани ҫинчен каласа пама хушрӗҫ те мана пирӗн районри колхозниксем. 1943 ҫулта гектартан 130 пӑт тырӑ туса илме обязательство илчӗҫ, Шупашкар районӗнчи колхозсене вӗсем ӑмӑртӑва чӗнеҫҫӗ,—терӗ хӑйӗн сӑмахӗнче Коротков юлташ.

Январӗн 14-мӗшӗнчи ирхи ларура Чарыков юлташ тунӑ доклад тӑрӑх прени малалла пычӗ. Тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинчен, тырпулӑн тухӑҫлӑхне малалла ӳстерсе пырас тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри малашнехи задачӑсем ҫинчен ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансем пӗрин хыҫҫӑн тепри тухса каларӗҫ.

Ишлей райҫӗрӗҫ пайӗн старши зоотехникӗ Краснов юлташ районри колхозсем выльӑх-чӗрлӗх хисепӗпе продуктивноҫне ӳстерсе пырассишӗн мӗнле кӗрешни ҫинчен, уйрӑм колхозсен ӗҫ опычӗ ҫинчен каласа пачӗ. ВКП(б) Йӗпреҫ райкомӗн секретарӗ Артемьев юлташ районри колхозсем тата машинно-тракторнӑй станци ҫуракине епле хатӗрленсе пыни ҫинчен тата кадрсем хатӗрлес ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен каларӗ.

— 1942-мӗш ҫул хушшинче Чӑваш республикинче выльӑх-чӗрлӗхсен хисепӗ планпа пӑхнинчен пӗрре ҫурӑ хут ӳснӗ. Ҫакӑн пек пысӑк ҫитӗнӗве пирӗн республикӑри колхозсем халиччен курман. Эпир унпа тивӗҫлипе савӑнма пултаратпӑр. Пирӗн республикӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе тата пысӑкрах ӳсӗмсем тума май пур. Аратлӑ выльӑхсен хисепне нумайлатассишӗн пирӗн тата вӑйлӑнрах ӗҫлемелле,—тет Наркомзем заместителӗ Соловьев юлташ.

Пӗтӗм ӗҫре социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ӑна ӑнлануллӑ ӗҫпе ҫыхӑнтарса пыни Елчӗк МТС-ӗн коллективне 1942 ҫулта пысӑк ҫитӗнӳсем тума май панӑ. Ҫакӑн ҫинчен калать Елчӗк МТС политотделӗн начальникӗ Михеев юлташ.

Елчӗк МТС-ӗ 1942-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗнче пур ӗҫсене те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пынӑ. Ҫураки планне—115,6 процент, ирхи тата кӗрхи ҫӗртме планӗсене пурӗ 131 процент, комбайнсемпе тырӑ вырас плана 114 процент, авӑн ҫапас плана 122,6 процент тултарнӑ. Ҫапла, МТС тракторсемпе тата комбайнсемпе тумалли ӗҫсен ҫулталӑкри планне, авӑн ҫапассине те шута илсе, 114,6 процент пурнӑҫланӑ, кашни 15 лаша вӑйлӗ тракторпа 464 гектар ӗҫленӗ, 6.857 тенкӗлӗх горючи перекетлесе хӑварнӑ. Тракторпа тумалли ӗҫсен хӑйне ларакан хакне 26 тенкӗ те 60 пус йӳнетнӗ. МТС ӗҫлекен колхозсенче тырпул тухӑҫлӑхӗ вӑтам шутпа гектартан 14,3 центнер пулнӑ. Елчӗк МТС-ӗ тракторсене юсамалли 1943 ҫулти плана пӗтӗмӗшлех пурнӑҫларӗ.

Канашлура Вӑрнар районӗнчи Ленин орденлӗ, Сталин ячӗпе тӑракан колхозӑн председателӗ Васянин юлташ 1943 ҫулта кашни гектартан 200 пӑт тӗштырӑ туса илме обязательство илчӗ. Ӑмӑртӑва Шупашкар районӗнчи чи лайӑх ӗҫлекен Молотов ячӗпе тӑракан колхоза, унӑн председательне Гаврилов юлташа чӗнчӗ.

Кун хыҫҫӑн ЧАССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Малов, Чӑвашсен ялхуҫалӑх институчӗн директорӗ Калинцев, Чӑвашсен ялхуҫалӑх институчӗн доценчӗ Тарчевский, ӑратлӑ выльӑх ӗрчетекен опытлӑ станцин научнӑй сотрудници Кузьминская тата ытти юлташсем тухса каларӗҫ тата Мари АССР-ӗнчен килнӗ делегацин руководителӗ, Мари АССР Совнарком председателӗн заместителӗ Ведерников юлташ тухса каларӗ.

Канашлу участникӗсем Чӑваш республикинчи мӗнпур колхозниксене, трактористсене тата ялхуҫалӑх специалисчӗсене чӗнсе каласа ҫыру ҫырчӗҫ, тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерес тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе государство панӑ плансене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртессишӗн Мари республикипе социализмлӑ ӑмӑртӑва тухма йышӑнчӗҫ, Чӑваш республикин обязательствисене палӑртса ҫирӗплетрӗҫ.

Партипе совет тата колхоз активӗ, пӗр ҫын пек пулса, ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн секретарӗ А. А. Андреев юлташ патне саламлӑ ҫыру яма йышӑнчӗ.

Январӗн 14-мӗшӗнчи каҫхи ларура 1942-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗнчи социализмлӑ ӑмӑртура Чӑваш республикинчи районсем хушшинче мала тухнӑ районсене ЧАССР Совнаркомӗн председателӗ Матвеев юлташ ЧАССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавӗсене пачӗ.

Сцена ҫине Шупашкар районӗн делегацийӗ. Хӗрлӗ ялава ВКП(б) Шупашкар райкомӗн секретарьне Караушев юлташа парса, Матвеев юлташ Хӗрлӗ ялав илме тивӗҫлӗ пулнӑ Шупашкар районӗнчи ӗҫҫыннисене ВКП(б) Чӑваш Обкомӗпе Совнарком ячӗпе саламлать. «Хӗрлӗ ялава алӑра ҫирӗп тытӑр, ҫак Хӗрлӗ ялавпа малалла утӑр, ялхуҫалӑх ӗҫӗнче ҫӗнӗрен пысӑк ҫитӗнӳсем тӑвӑр», тет вӑл.

Караушев юлташ Хӗрлӗ ялава алла илсе ответлӑ сӑмах калать:

— Районри ӗҫҫыннисен ячӗпе эпӗ ВКП(б) Обкомӗпе правительствӑна ҫапла шантарса калатӑп: пирӗн районри ӗҫҫыннисем, партипе совет организацисемпе колхозсем Хӗрлӗ ялава хамӑр аларах хӑварассишӗн, тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн татах та хӗрӳллӗнрех кӗрешӗҫ.

Сцена ҫине Ишлей районӗн делегацийӗ хӑпарать. Канашлу участникӗсем вӗсене алӑ ҫупса кӗтсе илеҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата унӑн продуктивноҫне хӑпартас тӗлӗшпе социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑ Ишлей районне ВКП(б) Чӑваш Обкомӗпе Совнаркомӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне параҫҫӗ. Хӗрлӗ ялава ВКП(б) Ишлей райкомӗн секретарӗ Сидоров юлташ илет.

— ЧАССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илсе, эпир геройла паттӑр Хӗрлӗ Ҫар валли, тӑван ҫӗршыв валли ялхуҫалӑх продукчӗсем малалла та ытлӑн-ҫитлӗн парса тӑма пулатпӑр. Эпир пысӑк чыса тивӗҫлӗ пулма пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшӑпӑр,—тет Сидоров юлташ.

Социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑ Елчӗк МТС-ӗ куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялав илет. Елчӗк МТС политотделӗн начальникӗ Михеев юлташ сӑмах калать:

— Кӑҫал иртнӗ ҫултинчен нумай хут лайӑхрах тата нумайрах ӗҫлеме пулатпӑр, халӗ илнӗ Хӗрлӗ ялава хамӑр аларан ямастпӑр,—тет вӑл.

Ҫакӑнпа канашлу хӑйӗн ӗҫне вӗҫлерӗ. Канашлу хыҫҫӑн унта пулнисем «Котовский» ятлӑ кинокартина пӑхрӗҫ.

Тырпулӑн тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн кӗрешеҫҫӗ

СОВЕТСКОЕ. 1943 ҫулта тырпулӑн тухӑҫлӑхне ӳстерес ыйту колхозсем умне тата вирлӗрех тухса тӑрать. Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнтерӳллӗ наступленине вӑйлӑн аталантарса пыма, нимӗҫ фашисчӗсен вилӗм сехетне ҫывхартма фронтпа ҫӗршыва, фабрикӑсемпе заводсенче ырми-канми ӗҫлекен рабочисене ялхуҫалӑх продукчӗсем нумайрах туса памалла. Районри чылай колхозсем ҫакӑншӑн куллен тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Вырӑнти удобренисене ытларах тухма тӑрӑшаҫҫӗ. Мӑн Явӑшри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз хӑйӗн уйхирне кӑҫал кӑна 1.225 лав тислӗк кӑларнӑ. Тырӑсене апатлантарма 150 пӑт кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 925 пӑт кӗл пухса хунӑ. Тырӑсем акмалли ҫӗр лаптӑкӗ ҫине—пурӗ 150 гектар ҫине юр тытса хӑвармалли щитсем лартса тухнӑ. Колхоз ҫуракине тухма хатӗрленсе ҫитет.

Мӑн Явӑш ялсоветӗнчи ытти колхозсенче те ҫуракине хатӗрленес ӗҫе пысӑк активлӑхпа туса пыраҫҫӗ.

А. Борисов.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Февралӗн 14-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Февралӗн 14-мӗшӗнче Кӑнтӑр фронтӗнчи войскӑсем, тӑшман вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, Дон ҫинчи **Ростов** хулине тытса илнӗ.

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи войскӑсем хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн **Ворошиловград** хулине (Украина) тата **Красный Сулин** хулине (Ростов облаҫӗ) тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех ҫапӑҫса пынӑ.

Иртнӗ эрнере, февралӗн 7-мӗшӗпе 13-мӗшӗ хушшинче, сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата аэродромсенче нимӗҫсен 243 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче пирӗн 101 самолет пӗтнӗ.

Февралӗн 1-мӗшӗпе 12-мӗшӗ хушшинче пирӗн карапсемпе авиаци Баренц тинӗсӗнче тӑшманӑн 6 транспортне тата хуралра ҫӳрекен пӗр карапне путарнӑ.

* * *

Февралӗн 13-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 5 батарейине пусӑрса лартнӑ, боеприпассен складне тата горючи складне сирпӗнтерсе янӑ, тӑшманӑн пӗр поездне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Лихая районӗнче пирӗн войскӑсем, ӑнӑҫлӑн малалла тапӑнса пырса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Ҫав пунктсенчен пӗриншӗн пынӑ ҫапӑҫура 2 оруди, 5 миномет, 8 противотанковӑй пӑшал тата 22 пулемет тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем пӗр шахтӑна тата халӑх пурӑнакан 2 пункта йышӑннӑ. 14 автомашина, боеприпассен складне тата продовольстви складне тытса илнӗ.

* * *

Ворошиловскран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем ӑнӑҫлӑн малалла куҫса пынӑ. Ҫапӑҫусенче нимӗҫсен пехотине пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ, вӗсене халь шута илеҫҫӗ.

* * *

Красноармейское районӗнче пирӗн войскӑсем наступлениллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Красноармейское хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пирӗн чаҫсем нимӗҫсен 2.000 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ, трофейӑсем хушшинче тӗрлӗ калибрлӑ 20 оруди, 20 танк тиенӗ эшелон, тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗ тиенӗ 10 эшелон, 500 автомашина тата темиҫе склад пур. Н-ски часть вирлӗн пырса ҫапса гитлеровецсене халӑх пурӑнакан пысӑк пунктран хӗссе кӑларнӑ. Тӑшманӑн 100 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Чугуев районӗнче пирӗн войскӑсем, тӑшманӑн контратакисене сирсе ярса, малалла куҫса пынӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем нимӗҫсен 7 танкне тата пӗр рота ытла пехотине пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра гитлеровецсем контратака тунӑ, вӗсем халӑх пурӑнакан пӗр паха пункта тепӗр хут тытса илме хӑтланнӑ. Совет боецӗсем тӑшмана сывӑха янӑ та пур тӗрлӗ хӗҫпӑшалсенчен те пеме тытӑннӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче хӑйсен 300 ҫити виллине тата ҫунса кайнӑ 3 танкне пӑрахса хӑварса, нимӗҫсем пӗр йӗркесӗр каялла чакнӑ.

* * *

Фатеж районӗнче пирӗн чаҫсем тӑшманӑн халӑх пурӑнакан пӗр пункта хӳтӗлекен гарнизонне аркатса тӑкнӑ, нимӗҫсен 160 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Н-ски соединенин чаҫӗсем малалла куҫса халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Тӑшманӑн контратакисене сирсе янӑ чухне пирӗн боецсем гитлеровецсен 2 ротине пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен 4 танкне персе ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Сумы облаҫӗнчи партизансен Тарас Григорьевич Шевченко ячӗпе тӑракан отрячӗ сасартӑк нимӗҫ гарнизонне тапӑннӑ. Партизансем тӑшманӑн 93 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, 2 пулемет, 60 винтовка, 15 лаша тата 10.000 патрон тытса илнӗ. Украинӑри партизансен тепӗр отрячӗ тӑшманӑн йышлӑрах вӑйӗсемпе ҫапӑҫнӑ. Совет патриочӗсем 100 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ, 40 нимӗҫ салтакне тыткӑна илнӗ.

* * *

Ростов облаҫӗнчи Романовская станицинче нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем совет гражданӗсене асаплантарнӑ—аллисене хуҫнӑ, куҫӗсене чиксе шӑтарнӑ. Гитлеровецсенчен хӑтарнӑ ҫав станицӑри ҫынсем совет патриочӗсем хӑйсене хӑйсем питӗ хастарлӑ тытни ҫинчен каласа панӑ. Фашистла бандитсем Валентин Чухова персе вӗлерме илсе кайнӑ чухне вӑл хытӑ сасӑпа—„Сывӑ пултӑр пирӗн совет ҫӗршывӗ!" тесе кӑшкӑрнӑ. Совет служащийӗ Кожанов хӑйне асаплантарса вӗлерес умӗн палача ҫапла кӑшкӑрса янӑ: „Тавӑрмалли сехет ҫывӑх ӗнтӗ! Сире, фашистла ҫӗлен-калтасене, пирӗн ҫӗр ҫинче тунӑ мӗнпур усал ӗҫсемшӗн Хӗрлӗ Ҫар тавӑрӗ!" тенӗ.

* * *

Югослави патриочӗсем нимӗҫсемпе итальянец оккупанчӗсене хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Айдовекра партизансем итальянецсен гарнизонне аркатса тӑкнӑ, 70 ҫынна тыткӑна илнӗ. Рисовац—Горня Сухая участокӗнче партизансем виҫӗ кун хушши пынӑ ҫапӑҫусенче 400 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Пилитвице районӗнче нимӗҫсен 6 танкне сирпӗнтерсе янӑ. Майкӑпа Чаплере партизансем нимӗҫсен ҫавӑрса илнӗ группине пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫаҫҫӗ.

Февралӗн 15-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Февралӗн 15-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех наступлениллӗ ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Лихая районӗнче пирӗн войскӑсем ӑнӑҫлӑн малалла куҫса пынӑ. Халӑх пурӑнакан пӗр пысӑк пунктшӑн пынӑ ҫапӑҫусенче Н-ски соединенин чаҫӗсем нимӗҫсен 26 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. 9 паровоз тата тӗрлӗ ҫар грузӗсем тиенӗ 150 вагон тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн боецсем 7 оруди, 15 танк, 68 автомашина, 7 паровоз, 400 вагон, тырӑ складне тата вӑрман материалӗсен 3 складне тытса илнӗ.

* * *

Ворошиловскран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем ҫапӑҫса пырса малалла кайнӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Хаяр ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 5 танкне тата пӗр батальона ҫити пехотине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Чугуев районӗнче пирӗн войскӑсем наступлениллӗ вӑйлӑ ҫапӑҫусем туса пынӑ. Тӑшман совет войскисене малалла кайма чарас тесе, ҫапӑҫӑва хӑйӗн чи лайӑх чаҫӗсене, ҫав шутра Францирен нумай пулмасть килнӗ эсэсовецсен дивизийӗсене кӗртсе ярать. Пирӗн чаҫсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, ӑна чӗрӗ вӑйпа техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем тӳстереҫҫӗ. Виҫӗ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче Н-ски соединенин чаҫӗсем нимӗҫсен 62 танкне ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ, 1.200 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра гитлеровецсем контратакӑна 15 танк янӑ. Пирӗн боецсем тӑшманӑн 11 машинине пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен ытти 4 танкӗ вара васкасах тарнӑ.

* * *

Золочев районӗнче пирӗн войскӑсем малалла тапӑнса пырса, халӑх пурӑнакан пӗр пункта тытса илнӗ. Нимӗҫсем хӑйсем ҫухатнӑ оборона рубежне каялла тытса илес тесе, темиҫе хут та контратака тунӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем тӑшманӑн пур контратакисене те сирсе янӑ, ӑна пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ.

* * *

Курскран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем малалла тапӑнса пынӑ. Н-ски соединенин чаҫӗсем халӑх пурӑнакан пысӑк пункта тытса илнӗ. Ҫав пунктшӑн пынӑ ҫапӑҫура нимӗҫсен 200 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. 12 оруди, 15 автомашина тата 3 тягач тытса илнӗ.

* * *

Ростов облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ нимӗҫсен боеприпассем тиенӗ поездне сирпӗнтерсе янӑ. Нимӗҫ захватчикӗсемпе ҫапӑҫса, партизансен отрячӗ 50 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, 3 мотоцикл, 46 винтовка, 3.000 патрон, 8 лав, 10 лаша, 1.000 пуҫ ытла мӑйракаллӑ выльӑх тата тырӑ хунӑ пысӑк склада тытса илнӗ. Ростов облаҫӗнчи партизансен тепӗр отрячӗ пӗр ялта нимӗҫ гарнизонне тапӑннӑ та ӑна пӗтерсе тӑкнӑ. 5 автомат, 40 винтовка, 4.000 патрон, 65 бинокль, 80 лаша тата продовольствин 2 складне тытса илнӗ.

* * *

Ново-Максимовский хуторӗнче, противникран тасатнӑскерте, пирӗн боецсем икӗ чул ҫуртпа интересленнӗ, вӗсен чӳречисене кирпӗчсемпе хупласа хунӑ, алӑкӗсене ҫапса лартнӑ. Ҫав ҫуртсенче красноармеецсен ҫурри ҫӗрнӗ 60 виллине тата вилме патне ҫитнӗ 16 красноармееца тупнӑ. Кайран палӑртнӑ тӑрӑх, нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем аманнӑ красноармеецсен ушкӑнне тыткӑна илнӗ те вӗсене унта питӗрсе лартнӑ. Ҫынсем вара майӗпен асаплӑ вилӗмпе вилнӗ. Хӗрлӗ Ҫар пырса ҫитни чӗрӗ юлнӑ красноармеецсене вилесрен ҫӑлса хӑварнӑ.

Йӗлтӗрлӗ кросӑн малтанхи кунӗ

Кроса малтанхи кун пурӗ 30 пин ҫын ытла хутшӑннӑ

Йӗлтӗрҫӗсен Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ ятпа пуҫланнӑ кросне пирӗн республикӑра малтанхи кун 30 пин ҫын ытла хутшӑннӑ.

Кроса Ҫӗмӗрле, Ҫӗрпӳ, Сӗнтӗрвӑрри, Вӑрнар, Калинински тата Хӗрлӗ Чутай районӗсем лайӑх хатӗрленсе хутшӑннӑ.

Кроса хутшӑннӑ ҫынсем нумайӗшӗ ГТО тата БГТО значокӗсен нормисене панӑ.

Шӑхасан, Комсомольски, Октябрьски районсенче кроса ҫавтери начар хатӗрленнӗ. Февралӗн 14-мӗшӗнче вӗсенче кроса мӗнпурӗ те 875 ҫын кӑна хутшӑннӑ.

* * *

СӖНТӖРВАРРИ. (Телефонпа). Йӗлтӗрлӗ кросӑн пӗрремӗш кунӗнче кроса районӗпе 1.861 ҫын, хулара—487 ҫын хутшӑнчӗҫ. 1.730 ҫын нормӑсем пачӗҫ. 3 километрлӑ дистанцие ҫаксем чи кӗске вӑхӑт хушшинче чупса тухрӗҫ: Пединститут студенчӗ Петрова—14 минута хушшинче, Госбанк агентствин работници Кирдяшева—15 минута хушшинче, вӑтам шкулта вӗренекен Маслеников—16 минута хушшинче чупса тухрӗҫ. Судоверфь работникӗ Бекренев 10 километрлӑ дистанцие 58 минута та 3 секунда хушшинче чупса тухрӗ. Уйрӑм коллективсенчен Пединститутпа вӑтам шкул коллективӗсем лайӑх результатсем кӑтартрӗҫ.

Чудновская.

* * *

ИШЛЕЙ. Районри пур организацисем те тенӗ пекех Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ ятпа пуҫланнӑ кроса активлӑн хутшӑнчӗҫ. Комсомолӑн Чантӑрти пуҫламӑш организацин секретарӗпе ялсовет исполкомӗ кроса тивӗҫлипе хакламаннине пула Чантӑр ялсовечӗ ҫеҫ хутшӑнаймарӗ.

Кроса мӗнпурӗ 799 ҫын хутшӑнчӗ. Вӗсенчен 741 ҫын ГТО тата БГТО нормисене пачӗҫ. Кроса хутшӑннисенчен 590 ҫын хӗрарӑмсем. Ку ӗнтӗ хӗрарӑмсене кросӑн задачисемпе паллаштарас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫленине пӗлтерет. Хутшӑннисен пӗтӗм хисепӗнчен комсомолецсем 66, профсоюз членӗсем 79 ҫын.

Районри пур организацисем те кроса тивӗҫлипе хатӗрленсе кӗтсе илейменнине палӑ тумалла. Ку енӗпе Вӑрмай Сӗкгерти туллимар вӑтам шкул директорӗ Васильев юлташ ертсе пыракан йӗлтӗрҫӗсен команди ҫеҫ тивӗҫлӗ результат кӑтартрӗ.

И. Григорьев.

Кроса сахал ҫын хутшӑннӑ

КӲКЕҪ. Районра кроса пурӗ 2000 ҫынна яхӑн хутшӑнмаллаччӗ. Хутшӑнма тивӗҫлӗ ҫынсенчен ҫурри те хутшӑнман. Колхозниксен командисем ҫеҫ мар, шкулсем те пурте хутшӑнман. Толиковӑри вӑтам шкул, Кӗнерти туллимар вӑтам шкул, Заводская ялӗнчи туллимар вӑтам шкул командисен кроса хутшӑнмасӑр юлма нимӗнле сӑлтав та пулман. Районра кроса пурӗ те 768 ҫын ҫеҫ хутшӑннӑ.

Ҫакӑн пек начар хатӗрленнине, сахаллӑн хутшӑннине пула кросӑн результачӗ те пахах пулман. Малти вырӑна, паллах ӗнтӗ, профсоюз членӗсемпе комсомолецсем йышӑнмалла пулнӑ, анчах вӗсем малти вырӑна тухайман. Альгеш шкулӗнчи 12 ҫулхи Локтевӑпа Н. Захаров пионерсем, 3 километрлӑ дистанцие 17 минутӑра чупса тухса, пӗрремӗш вырӑнсене йышӑннӑ. Район центрӗнчи врачебнӑй пункт работникӗсем кроса хӑйсем начар мар хатӗрленнине палӑртнӑ.

Греци посланникне А. Политис господина В. М. Молотов юлташ йышӑнни

1943 ҫулхи февралӗн 13-мӗшӗнче Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Грецин Совет Союзӗнчи Чрезвычайнӑй Посланникне тата Полномочнӑй Министрне А. Политис господина йышӑннӑ.

Ют ҫӗршывсенче

АНГЛИ ОФИЦЕРӖСЕМ ХӖРЛӖ ҪАР ҪИНЧЕН МӖН КАЛАҪҪӖ

ЛОНДОН, февралӗн 11-мӗшӗ (ТАСС). «Раша тудей» журнал Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ ятпа ятарласа хӑйне уйрӑм номер кӑларнӑ. Ҫав номерте Англи офицерӗсем Совет Союзӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем ҫинчен ҫырнӑ статьясем нумай. Сӑмахран, Англин Вашингтонри посольствинче авиаци атташи пулса ӗҫленӗ Чарльтон ҫапла ҫырать: «Хӗрлӗ Ҫарӑн тӗлӗнмелле ҫитӗнӗвӗсем, унӑн организованноҫӗпе ҫирӗплӗхӗ, питӗ пысӑк йывӑрлӑхсене те ҫӗнтерме пӗлни тата, юлашкинчен, ҫарӑн пӗтӗм ӗҫӗсене хавхалантарса пыракан, вӗсене материал тата ҫын резервӗсем парса тӑракан тата яланах ҫӗнӗ япала планлакан пӗрлӗхлӗ ӑс-пуҫӑн вӑйӗ, вӑл ҫӗнтерме тӑрӑшни ҫар ҫыннине те тӗлӗнтерет», тет.

Журнал тата Гоф генералӑн, парламент членӗн Мор подполковникӑн тата Бердвуд фельдмаршалӑн Хӗрлӗ Ҫара саламласа янӑ телеграммисене пичетленӗ.

Тинӗс-ҫар флочӗн офицерӗ Эдгард Юнг хӑйӗн статьинче ҫапла ҫырать: «Хӗрлӗ Ҫарӑн хӑй 25 ҫул тултарнӑ куна уявланӑ чухне хӑйӗн ҫитӗнӗвӗсене пула туяннӑ чаплӑ ятпа савӑнма пур сӑлтавсем те пур. 20 уйӑх хушшинче гитлерла йыткӗтӗвӗсене хирӗҫ тӗрӗссипе хӑй пӗччен ҫапӑҫса, вӑл хӑйне ҫав тери вӑйлӑн пыра-пыра ҫапнине сирсе тӑчӗ, ун пек пыра-пыра ҫапнине тӗнчере урӑх нимӗнле ҫар та тӳссе тӑма пултарас ҫук», тет.

ГЕРМАНИ ВОЙСКИСЕНЕ ШВЕЦИ УРЛӐ КАҪАРМА ЧАРМА ЫЙТАҪҪӖ

ЛОНДОН, февралӗн 11-мӗшӗ (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Швецири радикальнӑй ассоциаци правительствӑран Германи войскисене Швеци урлӑ каҫарма чарма ыйтса резолюци йышӑннӑ.

Ҫав ассоциаци тата Норвегин Лондонри правительствипе дипломатиллӗ ҫыхӑну тытма пуҫлама ыйтать.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ФРАНЦИЕ ҪАРАТАҪҪӖ

ЛОНДОН, февралӗн 11-мӗшӗ (ТАСС). АФИ агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, „Виши правительствин" Германин оккупациллӗ ҫарӗ пирки пӗр кун хушшинче тухакан расхочӗ 300 миллион франкран 500 миллион франка ҫитнӗ. Италин оккупациллӗ ҫарне тытса тӑма тухакан расход 35 миллион франк ӳснӗ. Расходсем ҫавӑн пек вӗҫӗ-хӗррисӗр ӳссе пынӑ пирки Франци банкӗ пӗр чарӑнмасӑр ҫӗнӗ банкнотсем кӑларса тӑрать.

ЭЙЗЕНХАУЭРАН ЗАМЕСТИТЕЛӖ ПУЛМА АЛЕКСАНДЕРА ЛАРТНӐ

ЛОНДОН, февралӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Ҫурҫӗр Африкӑри хӗҫпӑшаллӑ вӑйсен главнокомандующийӗ Эйзенхауэр генерал хӑйӗн заместителӗ пулма Англин Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен главнокомандующине Александер генерала лартни ҫинчен пӗлтернӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Кинофикаци Управленине халех ҫакӑн пек ӗҫсен мастерӗсем кирлӗ: киноопераци аппаратурине тӳрлетекенсем, радиоусилительнӑй аппаратурӑна тӳрлетекенсем, шалта ҫунипе ӗҫлекен двигательсене тӳрлетекенсем, электроток генераторӗсене тӳрлетекенсем, токарьсем, слесарьсем, вӗренекенсем, склад заведующийӗ тата бухгалтерсем кирлӗ.

Ӗҫ укҫине ӗҫленӗ тӑрӑх тӳлеҫҫӗ. Ҫак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамӗ, 21, ЧАССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Кинофикаци Управленийӗ.

Военторга Канашра ӗҫлеме ҫакӑн пек работниксем кирлӗ: бухгалтерсем, подсобнӑй хуҫалӑхсем валли рабочисем, ҫӗвӗҫсем (хӑйсен машинисемпе пӗрле).

Ҫак адреспа ыйтмалла: Канаш хули, Военторг.

От всех граждан принимается в РЕМОНТ ОБУВЬ на материале заказчика. С предложением обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Шевченко, 8, Дом инвалидов отечественной войны.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0—67, редакци секретарӗн—4—26, промышленность пайӗн—3—99, ялхуҫалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 069 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58 84 п.